Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

24 (7768) № ✻ Шăмат кун, 2010 çулхи апрелĕн (ака) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Ĕне сăвакансем малалла пăхаççĕ, пĕлĕве ÿстереççĕ**

## Çĕнĕлĕхсемпе паллашни хастарлăх ыйтать



***Эсир сăн ÿкерчĕкре «Ударник» хуçалăх ĕçченĕсене – сулахайран сылтăмалла: хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ Ю. Тимофеева, 20 çул ытла сĕт сăвакан В. Иванова, З. Хмелева (доярка стажĕ 9 çул), З. Иванова (6 çул), З. Андреева (20 çул ытла), Е. Иванова (10 çул), Г. Гурьева (7 çул) – пуш уйăхĕн 29-мĕшĕнче «Ольдеевский» акционерлă обществăри ĕçсемпе паллашнă чух куратăр. Вĕсем хăйсен ĕçĕнче чăн-чăн специалистсем пулнине Тури Панклире пурăнакан Зоя Степановна Андреева иртнĕ çул хăйĕн ушкăнĕнчи кашни ĕнерен 6011 килограмм, Зоя Хмелевапа Зоя Иванова 5 пин килограмм ытла сĕт суни те калать.***

***А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.***

**Шалти ĕçсен пайĕ асăрхаттарать**

## Нихăçан та тимлĕхе çухатмалла мар

Мускаври метро станцийĕсенче мартăн 29-мĕшĕнче пулса иртнĕ террор акчĕсем никама та лăпкă хăварма пултараймаççĕ. Айăпсăр çынсен пурнăçĕ сарăмсăр татăлни çав вăхăтра тата çав вырăнта кирек кам та пулма пултарнинех калать. Инкекĕ çумрах çÿренине никам та шутламан, паллах.

Çак лару-тăру пулса иртнĕ хыççăн районта пурăнакансене пурне те кирек мĕнле вырăнта та яланах тимлĕ пулмалли пирки тепĕр хут çирĕппĕн аса илтеретпĕр. Юнашар иккĕленÿллĕ çынсене, япаласене асăрхасан (вĕсем сумкахутаç таврашĕнче те пулма пултараççĕ), çийĕнчех ФСБ, ГО тата ЧС, шалти ĕçсен пайне пĕлтермелле, 02, 62-6-67 номерсемпе шăнкăравламалла.

Ятарлă ушкăн çитиччен вара асăрханă япала патне пымалла мар. Ытти çынсене те ун патне пыма чармалла. Çак вырăнта радио тата мобильлĕ çыхăнупа усă курма юрамасть. Электричествăпа ĕçлекен япаласене те сÿнтермелле. Эвакуацие йĕркеллĕ ирттерме майсем тумалла.

Терроризм тата экстремизм характерлă преступленисемпе кĕрешесси тата профилактика ĕçĕсене туса пырасси районти шалти ĕçсен пайĕнче яланах пысăк пĕлтерĕшре. Терроризмпа ĕçсене хирĕç кĕрешессипе тата вĕсене асăрхаттарассипе милици сотрудникĕсем кулленех тимлеççĕ.

Шкулсенче те учительсен профилактика тата ăнлантару ĕçне йĕркелесе тăтăш ирттерсе пымаллине манмалла мар.

Инкексене хамăрăн тимлĕхпе тата асăрханулăхпа маларах сирме пулать.

**В. МАКСИМОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн штаб пуçлăхĕ.**

**Апрелĕн 8-мĕшĕнче – Пĕрлехи йышăну**

## Коммуналлă пулăшу ыйтăвĕсемпе

2010 çулхи ака (апрель) уйăхĕн 8-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕ» общество организацийĕн Чăваш регион уйрăмĕ Чăваш Республикин Наци вулавăшĕпе пĕрле Чăваш Республикин муниципалитет районĕсенче тата хула округĕсенче пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă сферăра право хутшăнăвĕсене йĕркелес ыйтупа Пĕрлехи тематика йышăнăвĕ ирттерет. Вăл 15 сехетре пуçланать.

Организаци аппарачĕн ертÿçи Михаил Кузьмин каланă тăрăх, Чăваш регион уйрăмĕ вырăнсенче граждансемпе тĕл пулусем ирттерет.

Йышăнури калаçу пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемпе усă куракансен прависене хÿтĕлемелли граждан-право механизмĕсем, коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн тÿлев виçисене палăртмалли йĕрке, нумай хваттерлĕ çурта тытса тăмалли меле кура граждансен прависене хÿтĕлемелли уйрăмлăхсем çинчен пырĕ.

Граждансен ыйтăвĕсене ассоциаци юрисчĕсем, прокуратура сотрудникĕсем, муниципалитет пĕрлĕхĕсен администрацийĕн специалисчĕсем, территори общество хăй тытăмлăх управленийĕсен активисчĕсем хуравлаççĕ.

Аса илтеретпĕр: Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕн Чăваш регион уйрăмне 2007 çулхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче Шупашкар хулинче туса хунă. Юристсен ассоциацийĕ халăхăн хÿтлĕх кирлĕ ушкăнĕсене тÿлевсĕр юридици пулăшăвĕ парать.

**Муркаш районĕнчи консультаци пункчĕн адресĕ: Муркаш сали, Хĕрлĕ лапам, 5 çурт, тел.: 62-6-36.**

**Район администрацийĕ çумĕнчи тĕн пĕрлешĕвĕсемпе ĕçлекен Канашĕн ларăвĕнчен**

## «Тулти тирпейлĕх чунри йĕркелĕхе кăтартать»

Мăн кун çитрĕ. Кил-çуртсене, урамсене тасатрăр пулĕ-ха çак праçнике кĕтсе? Кĕçнерни кун район администрацийĕ çумĕнчи тĕн пĕрлешĕвĕсемпе ĕçлекен Канашăн ларăвĕнче (район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертÿçи, асăннă Канашăн председателĕ А.Е. Андреева ертсе пычĕ) те Мăн кун умĕн ял тăрăхĕсемпе чиркÿ прихучĕсен территорийĕсене тасатса тирпейлесси мĕнле пулса пынине, ку ĕçре чиркÿ прихучĕсем ял тăрăхĕсемпе мĕнле çыхăнса ĕçленине тишкерчĕç. Муркаш тата Етĕрне районĕсен Благочиннăйне пулăшаканĕ, Муркашри Турă Амăшĕн Владимирти турăшĕн чиркĕвĕ тата Турайри Христос çуралнин чиркĕвĕн настоятелĕ Федор атте Мăн куна кĕтсе хатĕрленсе ирттернĕ ĕçсем çинче чарăннă май çакна палăртрĕ:

– Юр кайман вырăнсене тасатма ĕлкĕреймесен те, ялсенчи аслă урамсене тирпейлемеллех. Çак тулти тирпейлĕх пирĕн чунри йĕркелĕхе кăтартса парать, – терĕ вăл.

Çавăн пекех вăл типĕ вăхăтĕнче юрласа-ташламалли тĕрлĕрен мероприятисене ирттерме кирлĕ марри çинчен те каларĕ.

Ярапайкасси ял тăрăхĕнче те Мăн куна кĕтсе тирпей-илем ыйтăвне мала хунă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Голубев каланă тăрăх, çавăн пекех кунта православи праçникĕ вăхăтĕнче те милицин участокри уполномоченнăйĕ йĕркелĕхе куçран вĕçертмест.

Ку темăна малалла тăсса çакна каламалла. Районти шалти ĕçсен пайĕн ертÿçи Е.И. Плечов ларура çакна палăртрĕ: Христос çуралнин, Христос шыва кĕнин, Мăн кун тата Çимĕк праçникĕсем вăхăтĕнче яланах чиркÿллĕ ялсенче милицин нарядĕ дежурствăра пулать. Православин ытти праçникĕсем вăхăтĕнче те йĕркелĕх хуралçисем кирлĕ пулсан, пĕрер кун маларах шалти ĕçсен пайне заявкăпа тухмалла. Ыйтăва тивĕçтереççĕ.

Чиркÿсен йышĕ районта хушăнсах пычĕ. Йÿçкассинчи Христос Çÿле çĕкленнин чиркĕвĕ те тултан илемлĕн курăнса ларать. Чиркĕвĕн прихут председателĕ З.М. Кутузов чиркÿ тума «Ударник» хуçалăх ертÿçи П.П. Давыдов питĕ нумай пулăшнине, анчах ăна пĕтĕмпех туса пĕтерме укçа-тенкĕ çитменни ура хунине палăртрĕ. Çавăн пекех чиркÿн священник пулманни пăшăрхантарни çинче те чарăнчĕ Зиновий Михайлович.

Ларура ял тăрăхĕн пуçлăхĕсемпе чиркÿ прихучĕн председателĕсене территорие тирпей-илем кĕртес ĕçе малалла тăсма сĕнчĕç.

Ларура пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсенче «Основы религиозных культур и светской этики» ятарлă курса вĕрентес ыйтăва та пăхса тухрĕç. Районти вĕрентÿ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертÿçи З.Ю. Дипломатова пĕлтернĕ тăрăх, асăннă курса 4 тата 5 классенче кĕртеççĕ. Кĕçĕн классене вĕрентекен 31 учитель ку дисциплинăна вĕрентес тĕллевпе курссенче пулнă. 4 классене кирлĕ учебниксемпе вĕренÿ пособийĕсене панă.

Ларура çавăн пекех ачасен кĕнекин эрнинче ачасене ăс-тăнпа нравственноç тата патриотла воспитани парасси мĕнле пулса пынине те пăхса тухрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Ыран – Мăн кун**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурне те Мăн кун ячĕпе саламлатăп.

Мăн кун пĕтĕм тĕнчери христиансемшĕн мĕн пур уявсен уявĕ, савăнăçсен савăнăçĕ пулса тăрать. Вăл ырăпа тĕрĕслĕх усала, пурнăç вилĕме çĕнтернине пĕлтерет («Христос вилĕмĕнчен чĕрĕлнĕ, вилĕмĕпе вилĕме çĕнтерсе, вилнисене чĕрĕлĕх панă» (Мăн кун кĕллин тропарĕ). Христос чĕрĕлсе тăнă кун пирĕнтен кашниех пĕр-пĕрне «Христос чĕрĕлнĕ!», «Чăн чĕрĕлнĕ» тесе виçĕ хутчен саламлать. Туррăн эпир пурте пĕлекен виçĕ халалĕ пире тĕрĕс çулпа утма, çывăх çынсене пулăшма, пĕр-пĕринпе ырă кăмăллă пулма вĕрентет.

Пирĕн ялан чун-чĕрепе пуянрах та илемлĕрех, тасарах пулма тăрăшмалла. Юлашки çулсенче çынсенче ĕненÿ туйăмĕ ытларах палăрма пуçлани те вĕсем çакна асра тытнине кăтартса парать. Малалла та ырăлăх енне туртăнасчĕ пирĕн, пĕр-пĕрне кÿрентермесĕр, усал ĕçсем тумасăр пурăнасчĕ. Вара çемьесем татах та телейлĕрех пулĕç, кашни ача ашшĕ-амăшĕн ăшшине туйса ÿсĕ, преступленисен йышĕ те палăрмаллах чакĕ. Турăшăн эпир пурте тăвансем пулнине асра тытса пурăнасчĕ пирĕн. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесен, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнсан, пĕр-пĕрне май килнĕ таран пулăшсан, йывăрлăхсене те çĕнтерме çăмăлрах пулĕ, ĕç те ăнса пырĕ. Ăнăçу вара паян пире кашни утăмрах кирлĕ: умра – çур аки. Ăна вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттермелле.

Ентешĕмĕрсем! Чĕрĕрсенче ыр кăмăл пĕрре те ан иксĕлтĕр. Районăмăр кунран кун пуянлантăр, чечеклентĕр тесе малалла та пĕрле тулли кăмăлпа ĕçлер.

Пурне те çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатăп. Турă сире, сирĕн çемйĕрсене инкек-синкекрен сыхлатăр, йывăр самантсенче çăмăллăх кÿтĕр, сирĕн, ачăрсен пурнăç çулне уçса пытăр. Вилĕмрен чĕрĕлсе тăнă Христосăн ырăлăхĕ яланах сирĕнпе пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

**Республикăра**

## Правительствăна отставкăна янă

Апрелĕн 2-мĕшĕнче Чăваш Ен Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов урăх ĕçе куçнă май Николай Федоров Президент унăн отставкине йышăннă. Çавăн пекех республика пуçлăхĕ Чăваш Ен Министрсен Кабинетне отставкăна ярасси çинчен пĕлтерекен указа алă пуснă. Документпа килĕшÿллĕн Министрсен Кабинечĕн Председателĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумне – Чăваш Ен сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрне Нина Суслонована шаннă.

Премьер отставкăна кайни çинчен пĕлтернĕ май Николай Федоров Раççей Федерацийĕн Правительствин Председателĕ Владимир Путин алă пуснă Хушупа килĕшÿллĕн Сергей Гапликова вице-премьерăн – Раççей Правительствин аппарачĕн ертÿçин Сергей Собянинăн пĕрремĕш çумне уйăрса лартнине палăртнă, вăл социаллă пурнăçпа экономика блокĕн департаменчĕсен ĕçне йĕркелесе пырĕ.

Николай Федоров Президент Хушăвĕпе Сергей Гапликова Тав тунă. Документра палăртнă тăрăх – «Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пысăк тÿпе хывнăшăн».

**Граждансене йышăнаççĕ**

## «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн обществăлла йышăну пÿлĕмĕнче граждансене 2010 çулхи апрель уйăхĕнче хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнмалли график

| Хăш кун | Йышăнмалли вăхăт | Кам йышăнать |
|---|---|---|
| Апрелĕн 6-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Юрий Александрович ИВАНОВ,** «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин вырăнти уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ |
| Апрелĕн 9-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Платон Павлович ДАВЫДОВ,** политканаш секретарĕн çумĕ, «Ударник» сăнавпа производство хуçалăхĕн ертÿçи |
| Апрелĕн 13-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Игорь Васильевич НИКОЛАЕВ,** политканаш членĕ, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертÿçи |
| Апрелĕн 16-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Лилия Юрьевна ТАРАСОВА,** политканаш секретарĕн çумĕ, район администрацийĕн йĕркелÿпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ |
| Апрелĕн 20-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Владислав Григорьевич ДАНИЛОВ,** политканаш членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ |
| Апрелĕн 23-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Фаина Федосеевна ГРИГОРЬЕВА,** парти членĕ, агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ |
| Апрелĕн 27-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Станислав Степанович ИВАНОВ,** Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн В.А. Морозов депутатăн пулăшаканĕ |
| Апрелĕн 30-мĕшĕ | 13–15 сех. | **Александр Александрович СИДЮШКИН,** парти членĕ, ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕн директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ |

**Поздравляем**

**ЗАО «МСО «Моргаушская» поздравляет всех ветеранов ВОВ с наступающим Великим праздником!**

**Всем ветеранам, купившим квартиру до 9 мая 2010 года в ЗАО «МСО «Моргаушская», организация сделает ПОДАРОК: отделка квартиры!!!**

**Обращаться по тел.: 63-1-19.**